# Фильм кăна мар, кĕнеке те




*«Кушкă шкулĕ - 125 çулта» ятпа кун çути курнă кĕнек&н хăтлавĕ Чăваш наци вулавĕшĕн «Марчан» тĕпелĕнча иртрĕ. Авторе - чăваш тĕнчине тĕпчекен, нумай-нумай кĕнакапе фильм авторе Владимир Галоша в.*

Мероприятие Чăваш наци конгресĕ пуçарнă «Чăваш Енĕн мухтавлă çыннисем» проектпа килĕшӳллĕн йĕркеленĕ. Лна библиотека специалисчĕ, ЧНКн культура комитечĕн ертӳçи Вера Архипова ертсе пычĕ.

Елчĕк районĕнчи Кушкă шкулĕн юбилейĕ тĕлне Владимир Галошев фильм хатĕрленĕ. Пухăннă материалпа усă курса кĕнеке те пичетленĕ. Владимир Петрович шухăшĕпе, çак икĕ ĕç пĕр-пĕрне хушса вăйлатса шкул историне тĕплĕнрех уçса параççĕ. Чăваш наци конгресĕн пайташĕсем - Лидия Филиппова, Вера Архипова, Роза Степанова, Максимилиан Севастьянов - пысăк та пархатарлă ĕçшĕн уяв хуçине тав турĕç. Залра çавăн пекех «В.Галошев журналистăн, ӳнерçĕн тĕнчи» кĕнекесемпе документсен куравĕ те ĕçлерĕ.

**Надежда СМИРНОВА.**